# Кӗнекене пахалanӑ

Çак кунсенче Наци библиотекинче Чӑваш Республикин тава тивӗçлӗ артисткин Надежда Кирилловӑн «Щепкинцы. Первая чувашская студия» кӗнеке презентацийӗ иртнӗ.

Кӗнеке авторӗ хӑй М.С.Щепкин ячӗллӗ театр аслӑ училищинчи пӗрремӗш студире пӗлӳ илнӗ. Халӗ унтан ӑс пухса килнӗ виçӗ ӑру К.В.Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче вӑй хурать.

Презентацие республикӑри культурӑпа искусство ӗçченӗсем, студентсем хутшӑннӑ. Чӑваш кӗнеке издательствин ӗçченӗ, «Щепкинцы. Первая чувашская студия» кӗнеке редакторӗ Галина Антонова хӑйӗн сӑмахӗнче чӑваш студийӗнче вӗреннисем кун çырӑвне типтерлӗ пурнӑçласа пынине, вӗсенче студентсен кулленхи пурнӑçне тӗплӗн çырса кӑтартнине палӑртнӑ.

Кӗнекепе паллашнӑ май çӗр-шыври чаплӑ училищӗре ӗçленӗ паллӑ педагогсем çинчен те вуласа пӗлме май пур. Надежда Кириллова хӑй вӑхӑтӗнче Ираида Петрова драматургпа та çыру çӳретнӗ-мӗн.

Хайсен шухӑшӗсене СССР халӑх артистки Вера Кузьмина, РФ тава тивӗçлӗ художникӗ Праски Витти, «Чӑваш Ен» ПТРК директорӗн çумӗ Елена Егорова, ыттисем пӗлтернӗ май Надежда Мефодьевнӑна пултарулӑх ӗçӗнче ӑнӑçу суннӑ. Уява хутшӑннисене Шупашкарти Ф.П.Павлов ячӗллӗ музыка училищинче вӗренекенсем илемлӗ юрӑсемпе саламланӑ.

**Н.СМИРНОВА**